Ч(чув)
К78
а50225-чув.

Василий
КЕРВЕН



# ТУЙĂМ



Национальная библиотека ЧР
4-025025
м 25025 неув

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Кар
С(Чув)
К
К78

Василий
КЕРВЕН

# ТУЙĂМ

Сăвăсем

Чăваш
кӗнеке
издательстви
Шупашкар
1982

84.3 ЧУВ.
К 76

Обязат. экз.

М 250ф25-Чув.

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

**Кервен В.**

К 76 Туйăм: Сăвăсем.—Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1980. 64 с. 10 п.

Василий Кервен сăввисенчи тĕп тема — çамрăклăх, юрату. Поэт тăван тавралăха хăйне евĕр курма пĕлет. Унăн лирикăлла геройĕ—хĕрӳ чĕрелле çын.

84.3 ЧУВ.

К $\frac{0763-045}{М136(03)-82}$ 93—82 4702650000

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1982 ç.

ПРОВЕРЕНО 2010

## ВУЛАКАНА

*Вăрман хăлхаллă та уй куçлă,*
*Тесе калатпăр-ха, çапах*
*Пĕлетĕн-ши: санпа эп туслă*
*Пулма шут тытнă тахçанах.*
*Паллашăва ялан пуç тайăп.*
*Мана тумастăн пулĕ айăп,*
*Яр-уççăн, пуринчен малтан,*
*Чун çырăвне вулаттарсан:*
*Чи хаклă ĕмĕтпе кĕтетĕп*
*Усал йăлтах тĕп пуласса;*
*Чĕрем шăратакан сасса*
*Эс хапăл йышăнсан, пĕлетĕп,*
*«Эп пĕр çын мар — эп хам пин-пин...»*
*Тăшманăм та чĕтрет, эппин.*

# Телей тĕпелĕ

### ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Нумай-нумай çынна хĕрӳлĕх патăн,
Çапах та иксĕлместĕн ĕмĕрте.
Паха парнӳ вăл—савăк сăн-сăпатăм,
Эсех-çке чĕртрĕн ырă ĕмĕте.

Çунатăн пĕтĕм Çĕр çинчи телейшĕн,
Мĕнпе танлаштарма пулать сана?
Çап-çут шевлишĕн те ырма пĕлменшĕн
Ун пек илĕртеет Хĕвел кăна.

Пĕр амăшĕ хăватлă пурнăç панăн,
Вĕсем сӳнми Юратупа тăван.
«Çав ПĔРЛĔХЕ пуласчĕ тивĕç
манăн»,—
Тесе мĕн çамрăкран тупа тăвам!

### ТЕЛЕЙ ТĔПЕЛĔ

Таса тӳпеллĕ
Тӳлек тĕнче —
Телей тĕпелĕ
Çак Çĕр çинче.

Пурне те çитĕ
Кунта хисеп.
Вăл анлă питĕ,
Чĕрем сисет:

Тĕнчех вырнаçĕ,—
Вăрçа çĕнсен.
Çавна шанаççĕ
Хастар çынсем.

**ТАНТĂШСЕНЕ**

Тăшман шăлне шакканă выççăн,
Çăтма хăтланнă ирĕке...
Эпир çуралнă вăрçă хыççăн,
Курман çав пысăк инкеке.

Анчах пурте аван чухлатпăр
Телейлĕ самана хакне.
Тăван çĕршыв кĕрешнĕ паттăр
Çăласшăн пĕтĕм тĕнчене.

Вута вутпа сӳнтернĕ халăх
Пурнать кашнин чун-чĕринче:
Хăй палăк вăл — асра тытмалăх —
Çак тăнăç пурнăç çĕр çинче.

Ăна, куç шăрçине сыхланăн,
Упрасчĕ вăрçă тивесрен.
Хаяр хуçи хура ылханăн
Юлинччĕ — такăнса пиртен.

## ЁНЕНӲ

«Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ пултăр»,—
Тесе суха пуçлать хресчен.
Шӳт вырăнне хурса кам култăр
Ту пек капмар сăмахĕнчен?

Ăмсанмалла пуян фантази
Хастар çынра пулни аван.
Поэт, тивĕçӳпе ăна çит,
Чăн пурнăçпа пулса тăван.

Ĕçлекене — эп ĕненетĕп,
Ун ĕмĕчĕ — чи шанчăкли;
Илем кӳрет çут тĕнчене те,
Эппин, вăл пуринчен хакли.

❀

«Сан юлташун чи паллă енĕ
Мĕскер?» — тесе ыйтсан манран,
Пăхмасăр калама вĕреннĕн
Çакна аса илеп малтан:

Шкултан ятарласа ярсаччĕ
Курма çĕршыв тĕп хулине.
Пĕрремĕш хут ун чух туйсаччĕ
Ытарлă ĕмĕт çитнине.

Анчах та кăмăл тулаймарĕ,
Эх, пăшăрхантăм-çке чунтан:
Мавзолее кĕрсе пулмарĕ,
Юсав пыратчĕ те унта.

Мана юратнă Шупашкарăм
Тепре ăсатрĕ Мускава.
Тӳрех çулпуç патне васкарăм,
Асран тухми тĕлпулăва.

...Пуçтах хĕл чĕпĕтесшĕн çатăр,
Умра — тем пысăкăш черет...
Эпир малтан мала куçатпăр,
Сивве мăнаçлăх çĕнтерет.

Пĕр кăмăллă çынсен парачĕ
Теме пулать ку ушкăна.
Ӑапла ют çын çумра пыратчĕ —
Ал патăм пĕлĕш пек ăна.

Эп çакăнта туйса илейрĕм
Тĕп-тĕрĕс компас пуррине.
Вăл — Ленин ĕçĕ-хĕлĕ, терĕм,
Çул кăтартать чун-чĕрене.

Эппин, кам халăхшăн вăй хурĕ,
Ялан пуç тайĕ чăнлăха —
Ман юлташсем вĕсем мĕнпурĕ,
Мухтав çав чаплă туслăха!

## УПАМСА

Çурална ен, тăван тавралăх —
Ытарайми чипер кĕтес!
Çавна ăста уçса памалăх
Мĕнле сăнар сăвва кĕртес?

Кавказ хитре. Капмар тусемлĕ,
Вĕçен тăрри ялан шап-шур,
Анчах хăйне кура илемлĕ
Лутра сăрт пирĕн ялăн пур.

Яштак хыр-чăрăш Çĕпĕрте те
Ӳссе кармашнă тӳпене.
Кунти вăрманшăн хĕпĕртетĕп,
Тăнлатăп савăк юррине.

Çыранĕнчен сиксе тухассăн
Юхать тем анлăш Енисей...
Çапах чун-чĕремпе хавассăн
Асатăп Русантан телей.

Кунта нихçан манми ачалăх,
Чи ырă вăхăт иртнĕрен,
Çурална ен, тăван тавралăх,
Чуна туртатăн кунсерен.

## ВЫРĂС ХАЛĂХНЕ

Чӳречерен сарă вырăс кĕрет.

Тупмалли юмах.

Ирхи тĕнчемĕр ăшă куçĕ —
Хĕвел пăхсассăн йăл кулса,
Тăван тавралăхăн çипуçĕ
Çиçет-çке. ылтăн пек пулса.
Çап-çутă пайăрка вĕр-çĕнĕ
Сăн парнелет те кил-çурта,
Епле сап-сарă вырăс кĕнĕ,
Тесе калать чăваш кунта.
Вăл аслă пиччĕшне илемлĕн
Танлаштарать-мĕн шевлепе.
Çав хисепе çĕнсе илетĕн,
Мухтавлă халăх, ĕçӳпе:
Чăвашăн шăпине çутатрăн,
Мĕн чухлĕ ăшăтрăн чунне.
...Ялан санпа пĕрле утатпăр,
Умра малашлăх — çуркунне!

## ЫРĂ ЯТ

*Çеçпĕле асăнса.*

Чăн-чăн чăваш ачи, чăваш каччи,
Йăваш теме сана никам ан хăйтăр.
Лутра халь пирĕншĕн тӳпе маччи,
Ăна сирсе çӳле çĕкленчĕ Кăйкăр.
Асаттесен пилне куç пек упрар:
Вĕсем хушман çынран пулмашкăн катăк.

Чăваш ятне нихçан ярасшăн мар
Қашнин чĕри мала чĕнсе шаккатăр.

Хастарлăх — вăхăтăн çуначĕ пек.
Ан пултăрччĕ никам çакна манаслă;
Пур халăхсен чи ырă ячĕпе
Тăван çĕршывăмăр чунтан мăнаçлă.

Хĕрӳллĕ Çеçпĕл кĕтнĕ сассуна,
Чăваш, ялан эс янратсам пит паттăр.
Тус-йыш шанать те ăнăçу сунать,
Тĕнче сăнать — çакна асра тытатпăр.

Чăн-чăн чăваш ачи, чăваш каччи,
Йăваш теме сана никам ан хăйтăр.
Лутра халь пирĕншĕн тӳпе маччи,
Ăна сирсе çӳле çĕкленчĕ Қăйкăр!

## ХАЛАЛ

Пайтах шыратпăр тĕлĕнтермĕш
Аваллăхпа малашлăхра.
Вăл хăш чухне куç тĕлĕнчех-мĕн,
Ăна тупатпăр çеç сайра.

Унран паян иртсе каймарăм,
Тен, пăхрăм пулĕ сăнаса:
Ĕçрен килетчĕ пĕр хĕрарăм,
Паллах, мĕн калăн, ывăнса.

Пепки пӳртрен тухать те унӑн,
(Халь чӑрманма-и ачупа?)
Тар юхтарса темле ӗҫ тунӑн
Хаваслӑн кӑшкӑрса чупать:

«Анне, аннеҫӗм, ҫисе ятӑм
Парса хӑварнӑ апата!»
Шалт тӗлӗнсе хытса каятӑп:
Хӗрарӑм ӗшенни ӑҫта?

«Пы-ы-ысӑк пул, маттурӑм!»—терӗ,
Вӑр-вар йӑтса илсе ӑна.
Ҫак сӑмахра темле пӗлтерӗш
Пурри шуйхатрӗ ӑстӑна.

Сахал тухать-и унӑн тарӗ
ЭТЕМ тӑвасшӑн ачине?
Эппин, мӗскер сунма пултарӗ
Лара-тӑра пӗлмен анне?

«Ҫамран илме пулать-ши тӗслӗх?»—
Тесе ыйтсан кӗтмен ҫӗртен,
Ҫук, шутламастӑп тӗрлӗ тӗслӗн,
Тӳрех калатӑп: «АННӲНТЕН».

Санра ун кӑмӑлӗ ларсассӑн
Ҫурхи илемлӗ ҫеҫкене,
Парсамччӗ ҫимӗҫне, тархасшӑн,
Пур пархатарлӑ сынсене.

## ЯЛТĂРА

Кăнтăр. Ялта. Пултарулăх çурчĕ.
Çутçанталăк питĕ ырă та...
Араскал тени мана та пÿрчĕ
Йăпанма çав хÿхĕм вырăнта.
Эп кунта канса курман пĕрре те,
Халь те килтĕм çула май кăна.
Вăрă евĕр вăрттăн çеç çÿретĕп,
Лайăх мар — пăхаççĕ ют сынна.
Уткалаççĕ, авă, питĕ сумлăн
Хут çинче суха тăвакансем.
Эх, пырса тăрасчĕ çума-çумăн,
Чунăма уçас килет-çке тем.
Кăнтăр. Ялта. Пултарулăх çурчĕ,
Чăннипех, кунта канма аван...
Шурă тăнлавли сасартăк курчĕ,
Куç хĕссе ăшра кулать манран:
«Иртерех-ха, çамрăк тусăм, саншăн
Халĕ пирĕнпе пĕрле канма».
Хăй çапах пăхать, пăхать ăмсаннăн,
Килĕштерчĕ тейĕн тумăма.
Кÿренместĕп вăл манран кулнишĕн.
Ырă кур, мăн кăмăллă юлташ.
Хĕпĕртетĕп çамрăк çын пулнишĕн,
Сум сахалтарах та — пур малаш.
Иртерех-ха, тĕрĕсех шутлатăн,
Канасси пирки пуçа ватма.
Çамрăклăх хитре иккен ытла та,
Хал тупасчĕ çанă тавăрма.

## АЛТӐР ÇӐЛТӐР

Чӑвашсен чи мӑн аслашшӗ —
Улӑп, тенӗ сӗм-авал.
Ун çинчен халап ӑслаççӗ,
Çӗкленсессӗн чун хавал:

Аттине çав çын силленӗ...
Тӑпраран сӑртсем-тусем
Пӗлӗте çити çӗкленнӗ,
Ларнӑ-мӗн ӳсе-ӳсе.

Улӑп пулнӑ вӑй-хӑватлӑ,
Пуçӗ лекнӗ тӳпене.
Ух, çӳле çакса хӑварнӑ
Хӑйӗн чаплӑ куркине.

Халӗ Алтӑр Çӑлтӑр, теççӗ
Чӑвашсем ӑна хайскер.
Эх, курма пӗрре çитесчӗ,
Юлнӑ пуль унта темскер.

Улӑпӑн хастар тӑванӗ
Вӗçрӗ анлӑ космоса.
Тен, тепри илсе те анӗ
Уçлӑхри мула ӑсса.

Ачалăха çитсе кĕретпĕр,
Асаттене илсен аса.
Вăл пушă чух пире темтепĕр
Ялан паратчĕ каласа:

«Ятне çуралнă çутă çăлтăр
Кашнийĕн пур-мĕн тӳпере...»
Çав халапра тупсаттăм кăлтăк,
Айван пулин те, çиччĕре:

«Эппин,—шиклентĕм эпĕ питĕ,—
Тӳпе хупланĕ пуçĕпех».
Асли калать: «Юнтармăш, çитĕ,
Вĕсем сӳнеççĕ хуçипех».

Эх, кăмăла хуçса хăварчĕ
Çав юлашки сăмах ун чух.
Хăть çăлтăрĕ юлсан аванччĕ,
Ан сӳнтĕрччĕ, тухсан та чун.

«И-и, ан кулян, ачам-шăхличĕ,
Ыррин çунать, тет, ĕмĕрех.
Вăр-варрăн куççульне шăлинччĕ»,—
Çапла йăпатрĕ вăл тӳрех.

Çавна аса илсе кулаççĕ
Манран пиччемпеле аппа...
Çапах та юрăхлă пуласчĕ
Вăлтса каланă халапа.

## АТӐЛ ХӖРРИНЧИ ТЕЛПУЛУ

*Н. Д.*

1

Яш каччӑ пек йӗри-тавралӑх
Ирех ҫураҫрӗ илеме:
Умра ҫиҫет туйри хаваслӑх,
Хӗвел хӑпарнӑ пиллеме.
Мӑнаҫлӑ Атӑл—мӑн кӗрӳ-мӗн,
Сиксе ташлать епле хӗрӳллӗн.
Ҫыранӗ ал ҫупать паян,
Урамӗ чечекпе пуян.
Ҫанталӑк хытӑ хӗпӗртенӗ,
Хӗрҫумӗ пек йӑл-йӑл ҫиҫет.
Чӗвен тӑрса, сенкер инҫет
Хула ҫине куҫне тӗлленӗ.
Мана ларма сӗнсе, ҫӑка
Тураттипе шӑлать сакка.

2

Кунтах лараҫҫӗ икӗ ватӑ.
Пӗри каларӗ: «Пуҫана,
Хальхи пекех эп астӑватӑп
Сан вут-кӑварлӑ яшлӑхна.
Паян вара ҫӳҫӳ шуралнӑ,
Ху та хавшанӑ ал-ураллӑ,
Чаксах пырать-мӗн вӑй-хӑват.
Эх, вӑхӑт, вӑхӑт мӗн тӑвать?
Ана ҫитмест ҫав ҫын ылханӗ,

Ялан васкать вăл малалла,
Туя тыттарчĕ вĕт алла».
(Çакна илтсен, кашни пăлханĕ:
Пире те таптĕ ку хĕн-хур,
Пурте яш чух анчах маттур.)

### 3

Тепри ăна васкавлăн чарчĕ:
«Пăрах-ха,—терĕ,—хуçăлма.
Паллах, унччен чылай хастарччĕ,
Халь те усмастăп пуçăма.
Эп мĕскĕн çын пулса юласшăн
Тар тăкнă-и вара юлташăм?
Асаплă вăрçă вутĕнче,
Çунса кĕлленнĕ чух тĕнче,
Аван-и, теттĕмĕр,—малашлăх!
Эпир, хастарлă йĕкĕтсем,
Çак пурнăçа чунтан кĕтсе,
Унпа хĕрӳ ĕçре паллашнă.
Ман чунăм нишлĕхе сивлет,
Хисеплĕ ватлăх вăл — тивлет».

### 4

Çак сăмахсем асамлă тейĕн —
Çĕклерĕç ман вăй-хăвата.
Çук, çухалмасть этем телейĕ!
Ахаль ятлатпăр вăхăта:
Вăл ытларах çитес ăрушăн

Нимскер туман çынна хăрушă;
Ырра усал сунакана,
Пĕр хăйшĕн çеç çунакана
Вăрах асра тытса усрамĕ;
Ун яланах виçи—пĕрре —
Ĕçпе хаклать вăл ĕмĕре.
Ак, çывăхри хула урамĕ
Çирĕплетмест-и ку чăнне:
Ят илнĕ Ивановăнне!

5

Ытарайми çыран илемĕ
Çурхи ейӳ пекех тулли.
Ăна кашни ăру иленĕ,
Ян! кайĕ хĕрупраç кулли...
Эй, анлă Атăл, аслă Атăл,
Ырми-канми пĕрмай юхатăн!
Пĕр вырăнта тăрас пулсан,
Кунта килеттĕм-ши паян,
Мана ун чух мĕн илĕртейĕ?
Сак евĕр пирĕн пурнăç та
Пĕр чарăнмиваскать таçта,
Пĕрех ĕçчен çынсем телейлĕ.
Вĕсен шутне кĕрес тесен,
Ан татăл ырă тĕллеврен.

**ЮХĂМ**

Çурхи юр ирĕлет,
Темле çын ирхине.



Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО
М 25025-Чув

Аптранă тейĕн ĕçсĕр,
Қанав уçса çӳрет:
Шыв хăвăрт юхнине
Қурасшăн имĕш вĕçсĕр.

Қӳлленчĕксем хуллен
Юхсан та пĕрлешсе
Çырма пулать, тет, тарăн.
Юр ирĕлсе пĕтсен
Шыв-шур та типессе,
Тен, чухламасть, мăнтарăн.
Эх, пурнăç та çапла
Юр шăпипе тăван
Қирек мĕнле этемĕн.
Қилмелĕх кăмăла
Аван-ха вăл, аван,
Татах ырра кĕтетĕн.

Анчах аса илсен
Умра мĕн иккенне
Чĕре епле ыратмĕ:
Ерипенех куллен,
Çилленнĕн хуçине
Қунçул иртсех пырать-мĕн.

Сăлтав-и ку пире
Ларма пуçа усса?
Чи хаклă ĕмĕр ирттĕр,
Анчах та вăл хитре
Юхсассăн ăнтăлса
Шăпамçăм пулмĕ ирсĕр.

Юр вĕçĕм ирĕлет
Чи пысăк тивĕçпе
Çырманалла васканăн.
Ķунçул, кунçул иртет...
Этемлĕхе ĕçпе
Юхса кĕресчĕ манăн.

### ĶĔРХИ ĶĂМĂЛ

Ķĕрхи çанталăк. Сивĕ çумăр
Шăл витĕр тухнăн пĕрĕхет.
Паян ĕçсен те айăп тумăр
Çулталăк ларнă эрехе.

Йăмра та тăрăшмасть тĕрекшĕн,
Пуçне пĕксе ларать çăка.
Сар çулçăсем пÿрте кĕресшĕн
Пырса çуллаççĕ кантăка.

Пĕр ушкăн кайăк-кĕшĕк халĕ
Çул тытнă ăшă кăнтăра...
Ĕçсен — салхулăхăм çухалĕ,
Сăлтавсăр савăнăп вара.

Юрлас-ташлас, эппин, чун кантăр,
Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче...
Чим, уй-хирте йĕмест-и кантăр,
Юлатăп, тет, юр айĕнче.

Йăр юхакан çап-çут тумлам та
Кӳççуль пек туйăнчĕ мана.
Ял сыннилле вăр-вар тумлантăм,
Çитме васкарăм вырмана.

...Вăй-хал çитнишĕн айăп тумăр,
Çук, тĕкĕнмерĕм эрехе.
Кĕрхи çанталăк. Сивĕ çумăр...
Чунра мăнаçлăх ĕрĕхет.

❋

Таçта пĕр канăççăр хуркайăк,
Ман пек, çул тытнă ир-ирех.
Сасси темме ытла хурланчăк,
Чуна пырса тивет тӳрех.

Кала, пĕччен çĕ çулçӳревçĕ,
Пĕлесчĕ хăвăртрах чăнне:
Камсем сана асап кӳреççĕ,
Е лекрĕн тунсăх капкăнне?!

Тен, эсĕ туслăха амантнă,
Ăна пултарнă çухатма?..
Çулра канмастăн-ха самант та,
Эппин, упрайнă çунатна.
Кая юлман чухне, хуркайăк,
Юлташусен çулне йĕрле!

Ман чун сисет, телей курайăн
Кунран-кун вĕсемпе пĕрле.

Мĕн тăвăн, эпĕ те хăвартăм
Туссем патне хам канăçа.
Пайтах хавшарĕ вăй-хăватăм,
Аша салхулăх вырнаçать.

Анчах ăна паян юнатăп,
Пĕчченлĕхе чĕрем сивлет.
Çĕнелнĕ кăмăл — ман çунатăм:
Тараймĕ аякка тивлет.

### ЧУН УÇÇИ

Тепĕр чух вăл кăмăл
Хупă алăк пек.
Калама ку — çăмăл,
Чăннипе — инкек.

Савăнма хистетĕн
Тăрăшсах хăвна.
Чун-чĕре нимле те
Йышăнмасть çавна.

Тен, тепри автранă
Уçă шыраса.
Эх, ыйтма манран ăс
Илĕ-ши аса?

Çук, ăна тухатмăп,
Ķалăп çеç мелне.
Ак епле тухатăп
Савăнăç тĕлне:

Ķăмăл — хупă алăк,
Çăрапах пулсан,
Маншăн çутçанталăк —
Ун уççи ялан.

## ĂВĂС

Çанталăк лăпкă. Çил çухалнă.
Хĕвел тăп-тăрă шыв ăсать.
Ачашшăн тĕлĕрет çăкалăх...
Анчах тем пулнă ăвăса?

Ун çулçисем пĕр чарăнмасăр
Вĕлтĕртетеççĕ иртенпе.
— Самант кăна ларсам пĕр сассăр,
Пăрах ача пек иртĕнме?

Тен, апăршан чĕри хускалнă,
Пачах çухатнă канлĕхе...
Çавна пула, кирек мĕн калăр,
Ман тус ку ăвăс халлĕхе.

## ÇУЛЛАХИ ИР

Хаваслă ир. Хыçра — çу каçĕ,
Тĕнче кăвак куçне уçать.

Пин юрă кайăксем акаççĕ.
Илем — чи тараватхуça.

Вăл кĕмĕл сывлăмпа тĕрлерĕ
Сип-симĕс пурçăн улăха.
Пĕлĕтсене хĕртсе пĕрерĕн
Хĕвел мăнаçлăн улăхать.

Ачаш çиле юратнă тырă
Пуçне сĕлтсе телей сунать.
Илемлĕ ир хĕр евĕр ырă,
Чунтан кĕтет ĕçчен куна.

## ТĂРНАСЕМ

Темĕнле салхуллă сасă
Илтĕнет ăш хыпмалла:
Тăрнасем-мĕн савăнмасăр
Çул тытаççĕ таçталла.

Виççĕн çеç. Мĕн-ма сахалăн?
Пăхрăм эпĕ тĕлĕнсе.
Хӳхлемерĕç пуль ахаллĕн
Вĕçнĕ чух пуç тĕлĕнче?

Çавăнпа сăн-питĕм хурлă,
Хам çухатнăн телее.
Тен, темле çынран шар курнă
Тăрнасен эртелĕ, е...

Ах, виç пăнчă пек вăраххăн
Курăнайрĕç инçетрен:

Каласа пĕтмен сăмахăн
Туйăнаççĕ халиччен.

## ХĔЛ УМĔН

Пуçланман-ха çатăр сивĕ,
Ӳкнĕ тин пĕрремĕш юр.
Саншăн халь кичемлĕх—кивĕ,
Ăшчикре хаваслăх пур...

Сĕм вăрман та капăр тумлă,
Ытараймăн çипуçне:
Тинкерет вăл, тĕкĕр тупнăн,
Шăнайман шыв-шур енне.

Çĕр каçипех сĕм вăрманта юр çунă,
Анчах илем те кăмăла хуçать:
Сехри хăпать паян йăваш чĕрчунăн,
Унта-кунта чупса çӳрет, куçать.
Вĕр-çĕнĕ, хăйшĕн хăрушла йĕр тунă,
Тĕл пулмĕ-ши темле усал куçа?
...Этем тени вăл çавăн пек чĕреллĕ —
Пуриншĕн те пăшăрханма вĕреннĕ.

# Пурнăç тĕррисем

❁

Пуян чĕлхеллĕ халăх яланах
Чунне уçма сĕм-авалтан юратнă.
«...Мĕн калаçни юлать...» тесе юрланă,
Пĕрмай пухса упранă вăл ăна.

Поэт мĕнпурĕ те çав йăлана
Тăсас шутпа Пегас тытса юрттарнă.
Ман кăмăла та ăнтăлу юранă,—
Инçе çула тухасшăн йăлăнать.

Салхуллă пулнă самани Шекспирăн...
Тавтапуçах, шăпа телейлĕ пирĕн,
Куллен вăл çĕнĕлĕх чылай сĕнет.

Чи кăткăс пурнăçа курса тĕпчесшĕн
Çырма шутларăм эпĕ те СОНЕТ —
Паха парне пулинччĕ çут тĕнчешĕн.

❁

Çĕнни çĕнмелĕх те усал урмалăх
Ырри вăй илчĕ пирĕн ĕмĕрте.
Тăван çĕршыв чи çутă ĕмĕте
Çӳле çĕклерĕ пур тĕнче курмалăх.

Сăпай хуçа кунта — хăватлă халăх,
Хастар этем — хисеплĕ тĕпелте,
Унпа пĕрле пуласшăн эпĕ те,
Çитинччĕ çеç чун-чĕрери пахалăх.

Кунçул виçевĕ урăхла паян,
Кашни хăйне туять ĕçпе пуян,
Мула хапсăнакан, ан тив, кӳрентĕр.

Пире хаклаççĕ аслă ÇЫНЛĂХпа,
Патшалăха унпа илем кӳретпĕр,
Ман мухтанас килет çав чăнлăхпа.

❀

Çынна çунат паман та — пурпĕрех
Çав сăмаха пĕрмай аса илетпĕр.
Тĕрĕссипе, халь унсăрах вĕçетпĕр
Юмахсенче ăмсаннă тӳпере.

Мĕн халиччен те çав-çавах пире
Юнашарри тĕлĕнтерет виçесĕр:
Хăшне-пĕрне сăнран пăхма — илемсĕр,
Кайран — килĕштеретĕн чиперех.

Пĕлсе çитсен, хăпас килмест унран,
Вăрттăнлăхна та çăкăр евĕр пайлăн —
Мĕнпурĕ те килет пĕр сăлтавран:

Çынна ун курăнми çуначĕ майлăн
Çӳле-çӳле, чыспа хисеп таран,
Çĕклекенни вăл—кулленхи САПАЙЛĂХ.

❀

Пурнасшăн эпĕ юратса чунтан,
Те çутçанталăк хăй çапла çуратнă.
Туссем нумай чухне — этем çунатлă,
Ура хумаççĕ — çĕкленме аван.

Çынсем — çурхи кунпа чылайăш тан.
Ханттар та пур, йăлтах чысне çухатнă...
Хăш чух аптратăн, çупкăпа çутатнăн:
Çав пӳтсĕрскер — кӳршӳ е тач тăван.

Паллах, пулать юлмашкăн икĕ питлĕ—
Чеен кирек кама та юрама,
Пер пĕлмĕше — ун чух сана кам питлĕ?

Анчах та ЁМĔТ кайĕ харама:
Усаллăха чун кураймасăр питĕ,
Лайăххине çук вăйлăн юратма.

❀

Ялйышĕпе е кӳршĕ-аршăпа
Харкашакан куштан—ман асаттешĕн
Тăшманĕ майлăн туйăнатчĕ темшĕн:
«Хĕртес килет-çке,—тетчĕ,—пушăпа».

Эп хам та килĕшетĕп-ха унпа —
Чараксăра ĕренкене кĕртесшĕн,
Анчах питне çунатăп хĕретесшĕн
Вăрçмасăрах — пĕр ăслă юрăпа.

Ăна юратнă халăх, хурлăх витĕр
Илсе тухса, упранă чĕринче —
Хăвна этем тесен, чунна вăл виттĕр:

Писмешкĕн юрамасть пĕр-пĕринчен,
Ара, «ПĔРЛЕ ПУРĂННИНЕ МĔН
ÇИТТĔР»,
Унран хакли тупаймăн çĕр çинче.

❀

Хăех телей-çке ку (ниçтан тунаймăн):
Сан — чаплă тĕнчене çуралмалла!
Кунта—ытарайми туссем нумайййăн,
Çунатлă ĕмĕт илĕртет мала...

Пурнас килни — виçесĕр пархатарлă,
Мĕнпур этемлĕхе тытса тăрать.
Ан тив, хĕн-хур пырса çапин хатарлă —
Вилессинчен çав туйăм хăтарать.

Çут хĕвеле эпир ялан курасшăн,
Хăпас килмест юратнă çынсенчен...
Çапах та хăшпĕри чунне çăласшăн
ЧЫСне сутма айванлăх çитерсен —

Питне кĕççе çĕленĕшĕн ял култăр,
Тăванĕшĕн те çичĕ ют вăл пултăр.

❁

«Эп курнине тăшманăм та ан куртăр»,—
Тесе калаççĕ пирĕн аттесем.
Çак сăмахсем чĕрешĕн — çивĕч пуртă,
Чуна çураççĕ самантрах вĕсем.

Çап-çамрăклах шуралнă ватăсен
Ӳпкелешме хаяр сăлтавĕ пур-тăр:
Ылханлă вăрçăран хĕнли мĕн пултăр,
Çӳç вирелле тăрать пуль асилсен.

Эп, тăнăç вăхăтра çуралнăскер,
Упрасшăн урăх ПИЛ, туссем, ятламăр—
Хăлаçланса сунмастăп темĕскер.

Илемлĕ ĕмĕтлĕ ача-пăчамăр,
Калас сăмахăм çав тери кĕске:
Эсир те пирĕн пек телей курсамăр.

❁

Айван ача чухне, ыйха татса,
Чи чăрсăр ĕмĕте çула кӳлеттĕм.
Кашни каçах, чап хыççăн ăнтăлса,
Таçта-таçта та самантрах çитеттĕм.

Е тепĕр чух, сасартăк кулянса:
«Эх, мĕншĕн çамрăкрах-ши эпĕ?—
теттĕм.—

Енчен те пысăк çын халь пулайсан,
Тăвансене тӳрех мухтав кӳреттĕм».

Кунсем-çулсем ăсанчĕç те, анчах
Ахаль çынран эп уйрăм мар пачах,
Çапах ку чăнлăх телейпе танлашĕ.

Ун вăйĕ вăл — çĕнелнĕ шухăш ман:
Атте-анне сунманччĕ чап тавращĕ,—
ЯТа çĕртме — тархасласах хушман.

*

«Ай-яр-ай-яр...» тесе юрланине
Эпир мĕн пĕчĕкрен илтсе ӳсетпĕр.
Чĕлхе вĕçне вăл тăтăш килнине
Тăнлана май, чăнах та, тĕлĕнетпĕр.

Çав илĕртӳллĕ çаврăм кăмăлтан
«Ай, тус, ай, тус...» тени иккен,
пĕлменччĕ.
Чăваш ăна упрать сĕм-авалтан,
Ачан ачи те, чун патне илсемччĕ.

Ман халăх ĕмĕр ырă пулнăран
Вăрçа ырлан пĕр юрă та тупаймăн.
Паян сасартăк, кăмăл тулнăран,
Калассăм килчĕ тĕнчене сăпайлăн:

Чăваш юрлать пулсан, ай-яр-ай-яр,—
Этемлĕх умĕнче те намăс мар.

❁

Ҫӳрен каска якалтăр-и, ара,
Тĕнче касса чылай-чылай ҫӳрерĕм.
Тумхахлă шухăш анине вара
Тавракурăмăма кӳлсе сӳрерĕм:

Қалас килет Тăван ҫĕршыв пирки—
Ăна илем кӳрет тем тĕрлĕ халăх.
Вĕсен ăмсанмалла йăли-йĕрки,
Ăсра юлаҫҫĕ ĕмĕр савăнмалăх.

МĂНАҪЛĂХ тулчĕ те чун-чĕрене —
Йăлтах Чăвашъенне илмеваскарăм.
Ăна (паха парнемҫĕм вырăнне)
Пулинччĕ хапăл шĕкĕр
Шупашкарăм.

Кунта ҫынсем — сăпайлă та ĕҫчен...
Мĕн лайăххи, пире татах илен!

❁

Теприйĕ кăкăрне чышсах
Тус йышлипе вĕҫмешкĕн хатĕр.
Хăй ăсĕпе ҫапла шутлать-тĕр:
«Пурнатăп ҫын ăмсанмаллах».
Вăл никама та ятламан,
Питлессинчен пушшех хăрана,
Кирек ăҫта та тус шырана,
Тĕллевĕ — харама кайман:

Çĕр тус — çĕр тенкĕ вырăнне
Тесе лăплантарать чунне,—
Ай, ырă çын пулса юласшăн.
Анчах та мĕскĕн чухлаймасть:
Чăн-чăн этем пулмасть юлташсăр,
Тăшмансăр та вăл пурнаймасть.

❁

«Çын» сăмаха çырар-и пысăкран,
Тесе калакансем паян чылайăн.
Тен, чăннипех те ку сĕнӳ аван?
Аван кăна-и? Илĕртӳллĕ лайăх!

Анчах кахал та ун шутне кĕрсен,
Пачах килмест çав шухăша
ырлассăм.
Вăл тухнă ĕнтĕ пĕтĕм йĕркерен,
Ятне çĕртет, епле сывламăн ассăн.

Чăн çыннăн çывăх тусĕ пур ялан,
Ăна ЁÇЛЕВ тесе манми ят панă.
Çавна мăн саспалли чи-чи малтан
Парнелесе чыслассăм килчĕ манăн.

Тавах ЁÇЕ—ÇЫН тунăшăн пиртен,
Услап хальччен хăпмасть упăтерен.

❁

Анне калать: «Ача çуралсанах
Пĕлме васкаттăм, айăп çук-и унăн?

Куçпуçĕ çăлтăр пек тесе мана
Пĕлтернĕ май лăштах пулатчĕ чунăм.

Ун хыççăн çеç тĕпчеттĕм: тĕнчене
Килсе кам савăнтарчĕ: хĕр е ывăл?
...Кайран вара, мансах çĕрне-кунне,
Пайтах тăрмашнă ӳстересшĕн сывă...»

Юратнă аннесем пире ялан:
«Çынран нихçан ан пултăр,—теççĕ,
—катăк».
Çапах та, мур илесшĕ, ăнсăртран
Хура чунли те тупăнать сасартăк.

Çĕр тӳсейми çав çыннăн пысăк АЙАП,
Ăна сутăнчăкпа танлаштарайăп.

❀

ТЕЛЕЙ мĕнне чухлакансем сахал,
Вăл сывлăх пек,
пулсан — сисместĕн, теççĕ,
Çук чух — çĕр çывăрми ăна кĕтеççĕ,
Чирленĕ хыççăн хаклăланнăн хал.

Аша-чике тулать-и çут хавал —
Ку камăн та пулин чун кучченеçĕ;
Лайăххисем хăй тĕллĕнех килмеççĕ,
Мĕнпур ырри-вăл — яланах халал.

Эпир кашни пĕрер çынна кăна
Савăнтарма пултарайсан та — усă
Куçкĕретех куçать-çке ушкăна:

Ан тив, никам ан юлтӑр юратусӑр,
Ун чух хӑй шӑпине хурлакана
Сайра курма тиветчӗ, хаклӑ тусӑм.

⁂

Хӑй калашлех, вӑл ӑссӑр мар, чӑнах,
Тӗллевсӗрскер тесе пачах ятлаймӑн.
Унпа юлхавлӑх юнашар пулаймӗ...
Ҫапах аптратӑн хак пама ӑна.

Мухтанасси кӗмен те йӑлана —
Ун вӑрттӑн ӗмӗчӗ — пуянлӑхра-мӗн.
Этем хаваслӑхне чунпа туяймӗ,
Теприн хуйхи те ют-ҫке яланах.

Ним те тӑваймӑн: тилӗ пек чее.
Ҫаклатнӑ евӗр чӑн-чӑн телее,
Пурнатӑп, тет, мӗнпур ҫын хапсӑнмалӑх.

Анчах вӑл МӖСКӖНне кӑтартмалла
Ҫапла калать ытарлӑн пирӗн халӑх:
Пурри — пӗрле, ҫукки те — ҫурмалла.

⁂

Куратӑп та ака тӑвакана:
«Пӗр пӗрчӗрен пин пӗрчӗ пултӑр»,—
тетӗп.
Чунтан-вартан хӗрӳ савакана
Сӳнми телей йӑл куласса кӗтетӗп.

Е йывăр çын пулать-и куç тĕлне —
Шутлатăп: «Вăл аван çăмăлланинччĕ».
Ќилет-иç «çĕнĕ кайăк» тĕнчене,
Унран хастарлă Ќăйкăр çитĕнинччĕ.

...Çемçен каламалли пурри — паха,
Ќашнин валли тупасчĕ ырă СУНĂМ,
Анчах та тепĕр чух çак сăмаха
Чĕлхе вĕçне тĕкет пăлханнă чунăм:

— Ых, сăхăскер, хăçан шалчу тулать,
Сана пула çын кăмăлĕ юлать.

«Автансăр ял» та хăратмасть мана,
Ќирек мĕн ту — пĕрех унта каятăн.
Паллах, куçран питлеймĕп тăшмана,
Вараланма пултарĕ ырă ятăм...

Пĕлсе тăрсах, тĕнче саккунĕнчен
Шикленмесе шанни — телей салтакĕ.
Чи пысăк тавăру мĕскер тесен,
Чĕрем çак хурава хĕрхӳллĕн акĕ:

Тепри мул пухассишĕн айванла
Пурнать ултавлăн, чунĕпе — пуш-пушă.
Ќайран пурин пекех ун каймалла
Пĕр пус та кирлĕ мар çĕре: хăрушă...

Ан тивтĕр, тетĕп, сăхă çын шăпи—
Вăл маншăн пулинех СЕХРЕ ХĂППИ.

❋

Пурнатăн çав тери аван,
Мĕскер кирли йăлтах пур санăн...
Çӳреттĕм шăпуна ăмсаннăн,
Çапла хăв тĕлĕнмен пулсан:

«Çула пӳлменччĕ-ха тăшман,
Кил-çуртăм та йĕркеллĕ манăн,
Çапах, таçта шалтан аманнăн,
Хĕрӳллĕн савăнса курман».

Ăс вĕрентни ан пултăр майсăр,
Асилтерем çын сăмахне,
Хамран вĕр-çĕнĕлĕх уçмасăр.

Шыра ытарлăх тупсăмне:
Ура çине ĕне пусмасăр,
Пĕлместĕн ПУРНĂÇ тутине.

❋

«Таси паха» тесе калаççĕ,
Чĕнмен хăна тухса кайсан.
«Хама та, тен, çавнах сунаççĕ?»—
Иккĕленӳ çуралĕ сан.
Сăлтавĕ çук-ха кӳренмелĕх,
Ырри е усалли илтмелĕх
Пире çын ĕмĕрĕ çитет —
Пач урăххи çӳçентерет:

Пулас килмест ман ҫут тӗнчешӗн
Хӑна кӑна чӗр пуҫӑнах.
Мӗн виличчен яр-уҫҫӑнах
Хама туясчӗ ун ӗҫченӗн.
Тинех вара чун шикленмест —
«Таси паха» сӑмах тивмест.

❋

Ура чӗрни таран сӑрланнӑ
Ялан йӑл кулӑллӑ хӗре,
Манран чӗр вӑрттӑнлӑх вӑрланӑн,
Тытса тӗпчес килет пӗрре:

«Мӗнле майпа-ха ним сисмесӗр
Пурнатӑн шухӑшсӑр пачах?
Санпа йӑпанаканшӑн эсӗ
Тетте пекех, ача-пӑчах.

Пуш хӑвӑл евӗр ахӑратӑн,
Ӳкӗнмелле пулать кайран»,—
Тесе каласчӗ те хӑратӑп
Манран ҫапла хӑй ыйтасран:

«Ӑс вӗрентетӗн-ха, мӑнтарӑн,
Хӑв пурнӑҫна хӑҫан ӑнтарӑн?»

❋

Эп юрату ҫинчен нумай шутларӑм,
Чунтан кӗтсе савниллӗ ырана.

Мĕнпур çитес тулли телейшĕн парăм
Пулма ман тивĕç, теттĕм, пĕр ăна.

Куç пек упранă çепĕç-çепĕç туйăм
Усса пымарĕ — кайрĕ çил çине...
Кама хур турăм, мĕншĕн пултăм
уйрăм?—
Пуçа пĕксе шыратăп тупсăмне.

Шухăшăмпа унта-кунта çитетĕп,
Путек çухалнăн пысăк кĕтӳре.
...Мĕн тăвăн, çĕвĕçĕн сăхманĕ çĕтĕк,
Тени тухать пуль маншăн та тӳрре.

Çапах та шăпама çапла ырларăм:
Тавах, манран туса хумарăн — Ларра.

☼

Çын аллипе кăвар туртма
Çăмăлраххи чеешĕн паллă —
Çавна пула пуçлать, шапаллă
çырма пекех, çăвар карма.

Тен, ĕнентерĕ такама,
Чĕлхе вăл çивĕч хĕç-пăшаллă.
«Çуралтăм пуль усал шăпаллă»,—
Тесе юрамĕ такăнма.

Суя-элек — вĕслетнĕ анчăк —
Çыртма чупса пырсан хыçран,
Ăна пӳлме тухсамччĕ, ШАНЧĂК.

Эп урӑх çын, чунпа-юнпа чӑваш,
Чи хаклӑ мулӑм-сывлӑхӑм чипер-ха...
Аса килет мана айван ачалӑх,—
Пӑр кайнӑ чух карап шыва яни.

Таçти пӗр тантӑш аллине лекинччӗ,
Тесе шутлаттӑм, аллӑмпа сулса.
Эппин, унта тиеннӗ ЫРӐ ҪӐМАЛ.

Мӗн пӗчӗкрен пуçланнӑ тӗллеве
Тӑсасчӗ тетӗп çӗр çинчи çынсемшӗн —
Меслечӗ çеç урӑхларах паян.

❀

Тӳпе маччи çу каçипе
Шултӑркаса аптратнӑ евӗр,
Шыв тӑкӑнать мӗн иртенпе,—
Ҫӗрхи куна пырса кӗретпӗр.

Текех кураймӑн çиçӗме,
Аçа çапа-çапа тӑраннӑ,
Ҫапах та темшӗн сисӗнмест:
Ҫурхи телей ӳсентӑранӑн.

Яш-кӗрӗм ташшине унччен
Асилтерме пултарнӑ çумӑр
Паян лӳшкетӗр темӗнччен —
Ана хӗрӳллӗн хапӑл тумӑр.

Ватти калать пӑхса çапла:
— Ҫулла ку кирлӗччӗ, çулла...

⁂

Танлаштарсан ытарлăн, чун-чĕрем —
Хура тăпраллă тулăх, анлă уйăм.
Хĕрӳ телейшĕн кирлĕ пысăк ТУЙĂМ
Çитĕнтерет вăл пĕчĕк пĕрчĕрен.

Тинех вара кĕрес килмест чĕрре,
Унчченхинчен сасартăк эпĕ уйрăм:
«Çын хушшине тухмалăх, чăн та,
пуйрăм»,—
Тесе шутлатăп çакă тĕнчере.

Пиçсе çитсен те «çимĕçсем» хĕп-хĕрлĕ —
Яланхиллех пулаççĕ икĕ тĕрлĕ,
Çапах пăшăрханмалăх пăсăк мар.

Пурне те вĕсене пухса илетĕп:
Тутли — ырра кӳрейтĕр пархатар,
Усал куçне йӳççи çунтартăр, тетĕп.

⁂

Пĕр пурнăç та çĕр пăрнăçлă чухне
Пырса çапăнасран камах шикленмĕ?
Вăл çынсенчен илтме кăна илемлĕ,
Хăвна лексен — кăтартĕ чăнлăхне.

Çав вăрăм çулăн ырлăх-хурлăхне
Чылай чăтсан, тен, кăмăл чечекленмĕ,
Çапах çӳресшĕн эпĕ пĕр çĕклемлĕ,
Унта упрасшăн ĕмĕт пурлăхне:

Ума пырса тухсан хăрушă вилĕм,
Аса илсен пулни-иртнисене,
Çапла çеç калайсан, капланмĕ çиллĕм:

«Сутмарăн, ЁМЁРĕм, чун-чĕрене,
Усаллăха пулма памарăн çилĕм,
Таса юлатăн çутă тĕнчене».

❀

Чĕре чул мар. Унта ярать тымар
Хăш чух пĕр шутламан çĕртен салхулăх,
Е хуйхă-суйхă та пуласшăн «тулăх» —
Кунçул пĕрмай кўреймĕ пархатар.

Анчах вĕсем ытлах хăрушă мар,—
Çынна курайманни, пачах ан çулăх.
Ытарайми юратупа хăюлăх
Сыхлавçă пек çўринччĕç юнашар.

Чĕре тени, аслатирен те хыттăн
Чăн туслăхшăн парсамччĕ сассуна —
Санран хăратăр «утă çинчи йытă»!

Тепри ним вырăнне хумасть çынна:
Чĕре чул мар, анчах чултан та хытă
Чĕре пурри ыраттарать чуна,

# Чулпа чечек

### ЮРАТУ КĂШАЛĔ

Ăна курсан çеç туйрăм
Чĕре ман пуррине.
Тĕнче те пулчĕ уйрăм,
Асрах çав çуркунне.

Ун тутинчен пуçланчĕ
Чăн-чăн телей тути.
Ял çумĕнчи уçланкă
Хальччен — кунçул çути.

Манпа чĕрре кĕреймĕç,
Чĕрӳ савмасть тесе.
Паян пурте — пĕрремĕш...
Курап кашни тĕсе.

Çаран — илем пасарĕ,
Илĕртӳлли нумай.
Савни çапла каларĕ,
Чечек суйланă май:

«Шуррийĕ — тĕл пултарĕ,
Хĕрли вăл — юрату,
Сарри — савни ултавĕ...»
Кунçулăм, кăшăл ту!

Анчах унта кĕминччĕ
Пĕрре те япăххи.
Ман юрату пулинччĕ
Чăн-чăн телей çыххи.

## СИСĔМ

Пĕрремĕш сивĕ çумăр
Çур çывхарни çинчен
Чӳречерен каларĕ
Хĕл кунĕ сисиччен.

Анчах чее тавралăх
Çав вăрттăн хыпара
Пĕр уяса тăмасăр
Хывать хавас юрра.

Çĕре кĕçех ачашлĕç
Хĕвеллĕ çумăрсем.
...Манпа та тĕлĕнтермĕш
Пулса иртет-çке тем:

Пĕрре пăхсах куç айĕн
Мăн кăмăллă пике
Паян хĕрӳлĕх пачĕ
Ман кӳтнĕ ăшчике.

Пуçламăш тĕлпулушăн
Йăл кулă кирлĕ мар.
Ара, çусан сив çумăр,
Ăшши те — юнашар.

## ПАЛЛАШУ

Унпа çул урлă çеç пурнатăп,
Инçех те мар пĕр-пĕринчен.
Хĕвел тухсассăн, çутататăп
Куçкĕскипе чӳречинчен.

Эх, туйăнать-çке куç хывассăн
Мана çапла вăл кулленех.
Ахаль-и йышăнать хавассăн
Ирхи саламлă шевлене?

Хĕвел манран тарсан, каçкӳлĕм,
Юлмарĕ хăй те парăма.
Кăшт ĕнтрĕк çапнă манăн пӳлĕм
Пуçлать каллех йăлтăртатма.

Çапла телей сунатпăр — калăн,
Ку кĕчĕ пирĕн йăлана,
Анчах та тĕксĕмрех çанталăк
Хăш чух пӳлсе лартать ăна.

Ун пек чухне те каçăн-ирĕн
Темскер кĕтеççĕ яш чунсем...
Юратура нихçан та пирĕн
Пулминччĕç пĕлĕтлĕ кунсем.

## ÇЫРЛАРА

Вĕтлĕхре телей хуçа та,
Иксĕмĕр кунта — чури.

Эс çырла çиме хушатӑн:
«Ах, пылак»,—тесе юри.

Чӑннипех, çырли хӗп-хӗрлӗ,
Ал сулатӑп ун çине.
Эх, чухласчӗ, кӳршӗ хӗрӗ,
Ху илемлӗ пиçнине...

❊

Хӗрсем хастаррӑн çип арлаççӗ
(Ӗçлетӗп эпӗ юнашар).
Куçпа мана, эх, çупӑрлаççӗ,
Юрать-ха, хам вӑтанчӑк мар.

Пӗрин патне пырса калаçрӑм.
Юлташӑм курчӗ те çакна
Çулланнӑ çын майлах
мӑнаçлӑн
Асӑрхаттарчӗ вӑл мана:

«Асту, ытла сахал чухлатӑн,
Сисмесӗрех, чӑх чӗппи пек,
Ниçта кайса кӗми чӑлханӑн
Вӗсен асамлӑ çиппипе».

Вылянчӑк сӑмаха ал султӑм
Хӑйне ӗненнӗ паттӑрла:
«Вӗсен çиппи çинçе те сулчӑ,
Кӑштах туртсан та татӑлать».

...Суя пулман юлташ сӑмахӗ:
Чӑлханчӗ-ларчӗ манӑн чун
(Çиппи хивре-иç юратун).
Анчах мӗскер ку, мӗн амакӗ?
Кунтан ырри пачах ан сун!

## ЭСӖ ÇЕÇ

Ансӑртран салху ӳкерчӗк
Куç умне тухать хӗлле:
Çӗкленет пӗччен юр кӗрчӗ,
Пӑшӑрханнӑ пек хуллен.

Çуркунне хӗвел хавассӑн
Ӑшӑтса пӑхсан ӑна,
Савӑк юрӑсем хывасшӑн
Ыткӑнать вӑл çырмана.

Тунсӑх та хӗвет вӑраххӑн
Ӑшчике умран-хыçран.
Ах, ӑна сирсе пӑрахӑн
Эсӗ çеç. Анчах хӑçан?..

## ТУНСӐХ

Пӗр хурӑн, инçете сӑнанӑн,
Вырнаçнӑ тӗмеске çине.
Вӑл тӑхӑннӑ килес хӑнашӑн
Çурхи чи чаплӑ кӗпине.

Кама кĕтет-ши куç илмесĕр,
Чĕвен тăрса хутран-ситрен?
Кунта тавралăхĕ илемсĕр,
Ӳсет хупах та вĕлтĕрен.

Уçланкăра начар е лайăх
Çумри юлташсăр хурăна?
Ăçтан çакна татса калайăн:
Кашни хăй майлă пурăнать.

Ман шутăмпа, шăпа киревсĕр,
Йăпатакан та пулмасан...
Тавтапуçах: çил, евчĕ евĕр,
Тем шăпăлтатрĕ унпалан.

## ÇУМĂР ТАШШИ

Урамра пĕр çамрăк каччă
Купăсне ярать тăсса.
Çумăр килчĕ те сасартăк
Тăпăртатрĕ, иçмасса.

Вăйăç кĕвĕ хыççăн кĕвĕ
Ывăтать чун варрине.
Манăн илтмĕш пулнă йăмăк
Карчĕ кантăк каррине.

Тен, ăна çапла кулмашкăн
Çумăр сĕннĕ маларах.
Янтă кĕвĕпе ташлать вăл
Кĕçĕр пирĕн салара.

*

Хитре хĕрарăмсем пулаççĕ,
Куça илес килмест ниçтан.
Телей пилленĕн йăл кулаççĕ,
Çурхи сар хĕвелпе пĕр тан.

Илем çуратнă çутçанталăк,
Мухтав çĕр хут, пин хут сана.
Курса ăнкарайми ăсталăх
Çитернĕ эс çав таранах.

Арçыннăн туйăмĕ яланлăх
Хĕрÿ пулнишĕн те рехмет.
Ахаль-и, çак сăмах янравлăн
Чĕлхем вĕçне халь ĕрĕхет:

Хитре хĕрарăмсем пулаççĕ,
Куça илес килмест ниçтан.
Вĕсем телейлĕн йăл кулаççĕ—
Эпир чунтан юратнăран.

*

Çĕре ÿкертĕм тĕкĕре —
Ванса саланчĕ вăл чăл-паррăн.
«Сире инкек пулать пĕрре»,—
Тесе ним чĕнмесрен каларăн.

Ун чух, чăнах та, ман шăпа
Ырри патнех илсе пымарĕ.

Вăл тĕл пултарчĕ те санпа
Çула ик еннелле пайларĕ.

Çапах та ваннă тĕкĕре
Эп тав тăватăп акă мĕншĕн:
Сана пĕлнишĕн тĕнчере
Тата çав юрату сÿнменшĕн.

## ШАНЧĂК

Калатчĕ ман юратнă
Аннем, уçса чунне:
«Ачам, сана çуратнă
Тул çутăлас чухне».

Пĕлмен темле пĕлтерĕш
Кунта пурри-мĕнне.
«Кăвак тĕс — шанчăк,—
терĕç,—
Кĕтсемччĕ ыррине...»

Такам килсе шакканăн
Чĕре чÿречинчен,
Сасартăк пĕтрĕ канăç
Паян çĕр варринче.

Çаран çинĕваскарăм
Утмăлтурат курма.
Каç сĕмĕ — сивĕ карă,
Тухса тăрать ума.

Чĕлхем йăтса çӳрерĕ
Хитре кăвак тĕсе.
Шапа илтсе витлерĕ:
«Кăв-вак, кăв-вак»,—тесе.

---

Шапа — шăпа-и маншăн,
Ан татăл, чун-чĕре?
Чечек тĕл пулайманшăн
Кĕтсе илес ире.

### ХАЯР СĂМАХ

Такам шут тытнă-ши темскершĕн
Çулла чĕр сухăр юхтарма.
Вăл йăрăс чăрăша тискеррĕн
Хыптарнă çăткăн çулăма.

Те сӳнтермен ăна йĕркеллĕ,
Тин ăнланма та йывăр çав.
Пĕр сăмахпа «усал» темелĕх
Тĕп тунă çамрăк йывăçа.

Хаярлăха чун ӳпкелесшĕн,
Вăл тăвăлать, кĕрет чĕрре.
...Юнашарах вăрман пилешĕ,
Ĕнсен те — юлнă-ха чĕрех.

Сапакине татса тутантăм,
Пылаккăн туйăнчĕ капла.
«Çын аллипе кăвар туртатăн»,—
Тесе шӳтлерĕм айванла.

Темрен хăранă пек сасартăк
Хытах шарт! çыртрăм чĕлхене.
Типшар амантнăскер каçартăр,
Туйма эп тивĕç ун хĕнне:

Ним айăпсăр çынна, мана та,
Çапла каланăччĕ пĕри...
Тен, ыррине часах манатăн,
Хаяр сăмах хальччен вĕри.

## ИНКЕК

Ман кӳршĕри мăн кăмăллă инкемĕн
(Ăна паян чĕнес килет çаплах),
Ун шучĕпе, çĕр тӳсейми инкек-мĕн.
Мĕн пулнă-ши çунса кĕл пулмаллах?

Тумтиршĕн çеç пĕрмай укçа тăкатчĕ,
Алран ямастчĕ сăрă-тĕкĕре.
Чиперлĕхне пула чи чаплă каччă
Савассăн туйăнатчĕ тĕнчере.

Качча кайсан та лăпланма пĕлмерĕ,
Кирлехчĕ имĕш урăх упăшка.
Сăн-сăпатне «телейсĕрскерĕм», терĕ,
Тен, çухатмарĕ вăрттăн шанчăка.

...Паян вăл асăрхарĕ пĕркеленчĕк,
Хăрах ури пусать-çке ватталла.
Пăрахăça йăлт тухнă пек кӳренчĕ —
Çинçе çĕртен иккен çип татăлать.

## ЧУЛПА ЧЕЧЕК

Çурхи пахчан чечен илемĕ —
Чечек ӳсетчĕ кĕп-кĕрен.
Пыл хурчĕсем ăна иленнĕ,
Пырса çӳретчĕç кунсерен.

Таçтан сив чул кунта çакланнă,
Пĕр хускалми выртать çапла.
Мĕн тăвăн, сулхăнра мăкланнă—
Чечек çеçке çурса хуплать.

Ăна хăртма хаяр шут тытнăн
Шăнарайласăр çиллине,
Вăл кунсерен пусатчĕ хыттăн
Чĕп-чĕрĕ тымарсем çине.

...Шăпа пулса, пĕр выльăх кĕнĕ
Такам яр уçнă алăкран.
Чула тивмен, чула тиркенĕ,
Телейĕ унăн — хытлăхра.

Татах хытмашкăн вăл пуçлайĕ,
Типмешкĕн юлчĕ ирĕке;
Хĕрхӳн кулса пăхать куç айĕн
Ватса пĕтернĕ чечеке.

Кичем кунта, текех килмеççĕ
Вĕл вĕçекен пыл хурчĕсем.
Тен, инçетре аса илеççĕ,
Пылакчĕ çеçкесем, тесе...

## ХУРА ПИЛЕШ

Хура пилеш, хура пилешĕм,
Яту шиклентернех мана.
Сан шăпуна аван пĕлесшĕн
Хĕлле çӳрерĕм пахчана.

Куç пек кĕтсе илме пултартăн
Ытарайми çуркуннене.
Такам та ăмсанмалăх лартăн
Таса шап-шурă çеçкене.

Кĕр çитнĕ майăн чун чăтмарĕ,
Шутларăм: пилеше курас.
Пырса пăхсан, шарт! сикрĕм мар-и:
Сапакусем сан хуп-хура.

...Мĕнле капла? Шур çеçкереччĕ
Пурин пекех вăл çуркунне.
Шăрши сур сухрăмран кĕретчĕ...
Кӳреннĕн татрăм çырлине.

Асăрханса кăна тутантăм —
Вăл хĕрлинчен-мĕн тутлăрах!
...Эппин, епле хура пулсан та,
Хурлас тесе ан шутлăрах...

## ХУРКАЙĂК ÇУЛĔ

Çĕрле пĕччен çӳретĕп кĕçĕр,
Салхулăх илчĕ тыткăна.

Пуç усăнасшăнччĕ те вĕççĕр —
Хăюллăн каçăртрăм ăна:

Такам юри, çил вĕрнĕ майăн,
Пăлхатнă пек вучах кĕлне,
Вак çăлтăрсен карти нумайăн
Тӳрех капланчĕ куç тĕлне.

Ăна кунта Хуркайăк Çулĕ
Тесе ят панă авалтан.
Миçе хутчен итленĕ пулĕ
Çав калава чун-хавалтан:

«Хуркайăксем тахçан тӳлеккĕн
Инçе каймашкăн тухнă, тет,
Анчах пĕри, тем ăншăрт лекнĕн,
Сасартăк хавшаса çитет.

Юлташĕсем унран салхуллăн
Вĕçсе иртеççĕ те вăрах,
Имшер çунаттипе ал сулнăн,
Чирли тăрса юлать хăрах.

Тусне çухатнă пысăк ушкăн
Ăна çул кăтартма пĕрмай,
Такам темле ӳпкевлĕн хушнăн,
Тĕксем пăрахнă-мĕн нумай.

Çапла çиçет Хуркайăк Çулĕ
Паян кунччен чăн тӳпере».
...Çунатлă ĕмĕтрен вăл çӳллĕ,
Çапах çитесчĕ-ха пĕрре.

Инçе çăлтăрсемпе этемĕн
Пур тейĕн çыхăну таçта,
Вăйййисене сăнанăçемĕн
Темскер йăшăлтатать шалта.

Тен, çав хуркайăк, пĕр-пĕчченçĕ,
Чунра халь çавăрнă йăва:
«Ил çуната, вăл тĕрекленчĕ»,—
Тесе калать юратăва.

Юрать, тăванăм, вĕçĕп кайăп,
Чăрмавлă çул та çĕр çинчех:
Пĕр вĕçĕ унăн — хамăн айăп,
Тепри — хĕрарăм чĕринче.

## СУНЧĂК

Кĕр кунĕ — çĕрĕшнĕ маччаллă,
Аптратрĕ шыв тăка-тăка.
Кун пек чухне (пурне те паллă)
Алран ямастăн сунчăка.

Киле кайма чăрмавĕ пурччĕ,
Хўтти хайхин пулман пулсан.
...Ăна аннеçĕм куçĕ курчĕ
Мана асăрхиччен малтан:

— Ахаль тумаççĕ тем сарлакăш,
Ку шăп та шай — ик çын валли.
Çумна çеç кирлĕччĕ пĕр акăш,—
Тесе калать шутламалли.

Çапла ытарлăн систересшĕн
Пĕрмай пăлханчăк кăмăлне:
«Часрах авланмалла сан»,—тесшĕн
Хальччен пĕччен çĕ ывăлне.

Ун шухăшне аван чухларăм:
Кунçулăмра аптратмалла
Йĕпе-сапасенчен — ман арăм —
Сыхлавçă-сунчăк пулмалла.

**ӲПКЕВ**

*«Тăлăх арăма*
*йытă та*
*хӳрипе тĕксе*
*хăварать, тет».*

Çакăн пек ӳпкев сăмахĕ
Илтрĕм пĕр хĕрарăмран.
Аш вăркать иккен, чăтма хĕн,
Çунакан çынна курсан.

Çамрăк пуçăн — упăшкасăр,
Пурнăç хуçнă ăнсăртран.
Май килинччĕ, пусăр-касăр —
Уйрăлмастчĕ вăл унран.

Уншăн çук-ха манăн айăп,
Чун сӳлетрĕ пурпĕрех.

Йăпатса мĕскер калайăп,
Йăл илинччĕ чиперех...

Йăлăнас килет-çке манăн
Кашнинех чун-чĕререн:
Хуйхăллă çынна ан манăр,
Хăрăр вăл кӳренесрен.

*

Нуша курман çынран
Ан ыйт нуша мĕнне:
Сĕм-суккăр ачаран
Пĕлни вăл — кас сăнне.

Анчах... нушаллинчен
Телей пирки ыйтсан,
Çĕр хут телейлинчен
Ăнлантарать аван.

**ТАВĂРУ**

Юмахра шап-шурă акăш
Хĕр пулса тăрать иккен.
Юрататтăм акăш-макăш
Итлемешкĕн ун çинчен.

Вăл чипер те чунĕ ырă...
Эх, пулинччĕ ман тĕле!

Ҫавӑтса мӑнаҫлӑн пырӑп
Пӗтӗм ҫын тӗлӗнмелле!

Юнашар пулма пӳрмерӗ
Ӗмӗтленнӗ пикепе.
Пурнӑҫ юмаха кӗмерӗ,
Илсе кайрӗ айккипе.

Чиперкке ҫулра тӗл пултӑм,
Чунӗнче — ултав хуҫа.
Ҫӑмӑллӑ хӗрех ал султӑм,
Айӑплас айван куҫа.

...Пӗлтӗм те юмах юратнӑ
Манашкал пӗр ачана,
Тӗлсӗр тӗлӗкрен вӑратнӑн,
Пӑхрӑм ыр сунса ӑна:

Чун савни ҫак «Сар Иванӑн»
Пултӑр ӗмӗтри пикех.
Ҫу вӑл — пурнӑҫа тӑванӑм
Маншӑн тавӑрнӑ пекех.

## ҪӐМӐЛ

Хӗрсем ҫӑваҫҫӗ чӳрече.
Пӗр пӑнчӑ та унта ан юлтӑр!
Ҫӗленчисем куҫ умӗнче
Ҫиҫе пуҫларӗҫ йӑлтӑр-йӑлтӑр.

Тин çеç хураччĕ, халь — таса,
Епле ансат шăпаллă кантăк.
Паян, мăнаçлăха манса,
Пĕрремĕш хут ăна ăмсантăм.

Ман кăмăла та çавнашкал
Такам çуса ярас пулсассăн,
Сасартăк кĕрĕччĕ хавал,
Сывлассăм çукчĕ эпĕ ассăн.

Тусан пуçтарнă кĕленче
Шевле çулне пӳлме пултарнăн,
Пĕрмай хаваслăх тĕлĕнче
Куçа хупласшăн вăл, мăнтарăн.

...Хĕрсен вăр-вар-çке ал-ури:
Эх, кантăкĕ епле çуталнă!
Сисмен те — вĕсенчен пĕри
Ман кăмăлах çума пуçланă.

# ТУПМАЛЛИ

Вулакана . . . . . . . 3

ТЕЛЕЙ ТЕПЕЛЕ

Тăван çĕршыв . . . . . 4
Телей тĕпелĕ . . . . . —
Тантăшсене . . . . . 5
Ĕненӳ . . . . . . . 6
«Сан юлташун чи паллă енĕ...» . . . —
Упамса . . . . . . . 8
Вырăс халăхне . . . . . 9
Ыррă ят . . . . . . . —
Халал . . . . . . . 10
Ялтăра . . . . . . . 12
Алтăр Çăлтăр . . . . . 13
«Ачалăха çитсе кĕретпĕр...» . . . 14
Атăл хĕрринчи тĕлпулу . . . 15
Юхăм . . . . . . . 17
Кĕрхи кăмăл . . . . . . 19
«Таçта пĕр канăççăр хуркайăк...» . . 20
Чун уççи . . . . . . . 21
Авăс . . . . . . . 22
Çуллахи ир . . . . . . 22
Тăрнасем . . . . . . . 23
Хĕл умĕн . . . . . . . 24
«Çĕр каçипех...» . . . . . . —

ПУРНĂÇ ТĔРРИСЕМ


«Пуян чĕлхеллĕ халăх яланах...» . . 25
«Çĕнни çĕнмелĕх те усал урмалăх...» . —
«Çынна çунат паман та...» . . . 26
«Пурнасшăн эпĕ юратса чунтан...» . . 27
«Ялйышĕпе е кӳршĕ-аршăпа...» . . . —
«Хăех телей-çке ку...» . . . . 28
«Эп курнине тăшманăм та ан куртăр...» . 29
«Айван ача чухне...» . . . . . —
«Ай-яр-ай-яр...» тесе юрланине...» . . 30
«Çӳрен каска якалтăр-и...» . . 31
«Теприйĕ кăкăрне чышсах...» . . . —
«Çын» сăмаха çырар-и пысăкран...» . . 32
«Анне калать...» . . . . . . —
«ТЕЛЕЙ мĕнне чухлакансем сахал...» . 33
«Хăй калашлех, вăл ăссăр мар, чăнах...» . 34
«Куратăп та ака тăвакана...» . . . —
«Автансăр ял» та хăратмасть мана...» . 35
«Пурнатăн çав тери аван...» . . . 36
«Таси паха» тесе калаççĕ...» . . . —
«Ура чĕрни таран сăрланнă...» . . 37
«Эп юрату çинчен нумай шутларăм...» . —
«Çын аллипе кăвар туртма...» . . 38
Шапа хупахĕ (Шурă сонет) . . . 39
«Японецсен пур çавăн пек йăла...» . 39
«Тӳпе маччи çу каçипе...» . . . 40
«Танлаштарсан ытарлăн...» . . . 41
«Пĕр пурнăç та çĕр пăрнăçлă чухне...» . —
«Чĕре чул мар...» . . . . . 42

ЧУЛПА ЧЕЧЕК

| | |
|---|---|
| Юрату кăшăлĕ | 43 |
| Сисĕм | 44 |
| Паллашу | 45 |
| Çырлара | — |
| «Хĕрсем хастаррăн çип арлаççĕ...» | 46 |
| Эсĕ çеç | 47 |
| Тунсăх | — |
| Çумăр ташши | 48 |
| «Хитре хĕрарăмсем пулаççĕ...» | 49 |
| «Çĕре ӳкертĕм тĕкĕре...» | — |
| Шанчăк | 50 |
| Хаяр сăмах | 51 |
| Инкек | 52 |
| Чулпа чечек | 53 |
| Хура пилеш | 54 |
| Хуркайăк Çулĕ | — |
| Сунчăк | 56 |
| Ӳпкев | 57 |
| «Нуша курман çынран...» | 58 |
| Тавăру | — |
| Кăмăл | 59 |

Для старшего школьного возраста

Василий Кервен
(Василий Гаврилович Кошкин)

ЧУВСТВА

Стихи

На чувашском языке

ИБ 1070

Редактор Р. В. Бородкина
Художник В. Н. Гончаров
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Л. Т. Захарова

Сдано в набор 28.12.81. Подписано к печати 23.02.82. НТ 13104. Формат 60×90/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 2,00. Усл. кр.-отт. 2,15. Учетно-изд. л. 2,07. Тираж 1000 экз. Заказ № 5785. Изд. № 93. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.



10 пус.

Чăваш
кĕнеке
издательстви
Шупашкар
1982